# ТĂВАН ЧĔЛХЕ – АТТЕ ĂС-ПУÇĔ, ТĂВАН ЧĔЛХЕ – АННЕ САССИ

*(Ача ашшĕ-амăшĕ пухăвĕн сценарийĕ)*

**Ĕç тĕллевĕ:** ачасен ашшĕ-амăшĕсене тăван чĕлхене мĕншĕн юратмалли тата упрамалли çинчен ăнлантарасси, чăваш чĕлхин пуянлăхне уçса кăтартасси, чăвашла калаçма кăмăл-туйăм çуратасси.

**Мероприятире кирлĕ хатĕрсем:** чăваш юрри-кĕвви, музыка техники, ваттисен сăмахĕсемпе паллă çынсен каларăшĕсене çырнă плакатсем, ашшĕ-амăшĕсем валли хатĕрленĕ анкетăсем, курăмлăх материалĕ т. ыт. те.

**Уяв йĕрки**

Залра илемлĕ чăваш кĕвви янăрать. Воспитатель ачасен ашшĕ-амăшĕсене çавра сĕтел хушшине вырнаçса ларма сĕнет.

Ырă кун пултăр, ашшĕ-амăшĕсем! Вăхăт уйăрса пирĕн пата килнĕшĕн тавтапуç пурне те. Эпир сире курма яланхи пекех питĕ хавас! Паянхи пухăва хаваслă кăмăл-туйăмпа, çĕнĕ ĕмĕтпе пуçлар.

Кашни юнашар ларакана хаклă сăмах каласа савăнтарар-ха. Тĕслĕхрен: «Светлана, эсир паян ытти чухнехи пекех питĕ кăмăллă…».

Пуху тăршшĕпех пирĕн чĕресенче çакăн пек ырă туйăм хуçалантăр.

Паянхи пухăвăн теми: ***«Тăван чĕлхе – атте ăс-пуçĕ, тăван чĕлхе – анне сасси».***

Тавах, анне, çуратнăшăн,
Сÿнми телей пилленĕшĕн,
Çуратнăшăн, юратнăшăн,
Чĕкеç чĕлхи пилленĕшĕн!

Çыннăн пĕр анне. Тăван чĕлхе те пĕрре. Пирĕн тăван чĕлхе – чăваш чĕлхи. Чăваш чĕлхи – пуян, илемлĕ, çепĕç, паха тата асамлă. Вăл чăваш юрри пек янăравлă та кĕвĕллĕ, унпа чуна ачашлама е йăпатма, çĕклеме, хавхалантарма пулать. Çак чĕлхепе чăвашсем пин çул каяллах калаçнă, ăна вĕсем пĕр-пĕрне ламран лама, сыпăкран сыпăка халалласа пынă, куç пек упрама тăрăшнă.

Тăван чĕлхере халăхăн йăли-йĕрки, илемĕпе чун асамлăхĕ, ăсĕпе мулĕ сăнарланаççĕ. Ачаранах пире тăван чĕлхе çут тĕнчене ăнланма, хамăр валли пысăк пурнăç тĕнчине уçма пулăшать. Чĕлхесĕр общество та аталанма пултараймасть. Этем тени пĕр-пĕринпе хутшăнмасăр пурăнаймасть. Хутшăнма вара çынна чĕлхе кирлĕ. Чĕлхе пĕр-пĕринпе паллаштарать, туслаштарать, тепĕр чухне кÿрентерет те, çапăçтарать те. Ваттисем ахальтен каламан: «Йытăпа йытă харкашса паллашать, çынпа çын – калаçса». Чĕлхе пире ĕçре те, уявра та, вĕренÿре те кирлĕ. Чĕлхе çынна вĕрентет, унăн тавра курăмне анлăлатать, курманни-пĕлменни çинчен пĕлтерет, çыннăн ăс-тăнне кăна мар, туйăмне те талăнлатать.

Чӗлхе урлӑ ҫынпа ҫын кӑна мар, халӑхпа халӑх та пӗр-пӗринпе хутшӑнать. Чӑваш чӗлхи тӗрӗк чӗлхисемпе хурӑнташлӑ. Ку чӗлхесен йышӗ чылаях пысӑк – вӑтӑр виҫҫӗ. Ҫак ушкӑна турккӑсем, тутарсем, узбексем, казахсем, азербайджансем, уйгурсем тата ыттисем те кӗреҫҫӗ. Ҫак чӗлхесенче хӑш-пӗр сӑмахсем пӗр евӗрлӗ илтӗнеҫҫӗ. Тӗслӗхрен, чӑвашла – *анне*, *чечек*, ытти тӗрӗк чӗлхисенче – *ана, она, чэчэк*. Турккӑсем, азербайджансем, туркменсем кашни хӑй чӗлхипе калаҫсан та пӗр-пӗрне лайӑх ӑнланаҫҫӗ. Тутарсемпе пушкӑртсем те, казахсемпе кӑркӑссем те ҫавнашкал.

Чӑваш чӗлхи витӗмлӗ те сӑнарлӑ. Акӑ, тӗслӗхрен, ҫӑлӑн куҫӗ те, хӗвелӗн ури те, уйӑхӑн хӑлхи те ҫук. Анчах халӑх ҫут ҫанталӑка чӗрӗ пек курса, сӑнарлӑ ӳкерсе кӑтартнӑ.

Хӗвел, тух, хӗвел, тух!
Хӗвне кулӑ чиксе тух.
Вӑй выля пирӗнпеле,
Ташӑ ташла пирӗнпеле.
Ай-ар-ай-яр! Ай-я-ра!
Хӗвел, тух, хӗвел, тух!
Хӗвне кулӑ чиксе тух.
Шевлӳсене парнеле,
Сарӑ кун пире пилле.
Ай-ар-ай-яр! Ай-я-ра!

Анне каҫсерен юрланӑ сӑпка юррисен, асанне юптара-юптара панӑ тӗлӗнмелле асамлӑ халап-юмахсен хакӗ ҫук.

П. Хусанкай ҫырнӑ «Сӑпка юрри» юрра итлесе пӑхар (*видеоролик кураҫҫӗ*). Эсир вара чӑвашла мӗнле сӑпка юррисем пӗлетӗр? Ачасене сӑпка юррисем юрласа паратӑр-и? (*Ашшӗ-амӑшӗсен хуравӗсем.*)

И.Я. Яковлев пирӗн чӑваш ҫӗр-шывне ҫӗр пин юрӑ, ҫӗр пин тӗрӗ, ҫӗр пин сӑмах ҫӗр-шывӗ тенӗ. Чӑнах та, юррисем кӑна мӗн тӗрли ҫук пулӗ чӑваш халӑхӗн: ташламалли марш, мухтанмалли гимн, чӗрене тивекен тӗрлӗрен юрӑсем. Эпӗ сире И. Сакмаров илемлетнӗ «Уттарар-и утсене» халӑх юррине итлеме сӗнетӗп. (*Видеоролик кураҫҫӗ.*)

Чӑваш ташши тата мӗнле илемлӗ те ҫӑмӑл! Хӗрарӑмсем ҫемҫен, тикӗс, лӑпкӑн ташланӑ. Ташланӑ чухне урасене урайӗнчен уйӑрманпа пӗрех, аллӑсене вара куҫ шайӗнчен ҫӳле ҫӗклемен. Арҫынсен ташшисем урӑхларах пулнӑ: вӗсем хӑвӑрт, хӗрӳ ташланӑ. (*Видеоролик кураҫҫӗ.*)

Эсир ачасемпе чӑваш вӑййисем вылятӑр-и? Атьӑр пӗр вӑйӑ выляса пӑхар.

Воспитатель ачасен ашшӗ-амӑшӗсене «Ят пӗлмелле» вӑйӑпа паллаштарать.

Малтанах ертсе ҫыракана суйлар. Эпӗ шут сӑвви калатӑп.

Пӗрре Вера качча кайнӑ,
Шӑрттан касма ҫӗҫӗ панӑ,

Сĕсĕ вĕсĕ хуçăк пулнă.
Алтать, палтать, тенкĕ çапать,
Кам телейлĕ, çав тухать.
(*Вăйă выляççĕ.*)

Эсир ачасемпе çакăн пек интереслĕ вăйăсем килте те выляма пултаратăр. Чăваш вăййисемпе çак кĕнекесенче паллашма пулать. (*Воспитатель ачасен ашшĕ-амăшĕсене «Ача-пăча вăййисем», «Пĕрле выляр-ха» кĕнекесемпе паллаштарать.)* Н.К. Крупская пирĕн чĕлхе пирки акă мĕн каланă: «Эпĕ чăвашсем калаçнине илтнĕ, вĕсен чĕлхи тĕлĕнмелле çепĕç чĕлхе». Чăн та, чăваш чĕлхинчен çепĕçреххине те, илемлĕреххине те, пуянраххине те, янăравлăраххине те урăх ниçта та тупаймăн. Эпир вара паянхи пухура сирĕнпе çакна курса ĕнентĕмĕр.

Воспитатель ачасен ашшĕ-амăшĕсене анкетăри
ыйтусем çине хуравлама сĕнет.

Юлашкинчен манăн çакна калас килет: «Чăвашсем, хăвăрăн чĕлхĕре ан манăр, ăна ан çухатăр, ăна çухатсан эпир хамăр та çухалăпăр. Чăваш ячĕ те çĕр çинче юлмĕ. Апла пулсан тăван чĕлхене упраса хăварассишĕн çине тăрсах тăрăшар, унăн малашнехи кун-çулĕ вăрăм пултăр тесе те чуна парсах ĕçлер.

Сирĕн çемьере яланах юрату, килĕшӳ, ăнлану, ырлăх, сывлăх хуçалантăр. Телейлĕ пулăр!

**Литература**

*Антонова З.С., Портнова З.Н.* Пĕрле выляр-ха: ача сачĕсем валли. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1992.

*Воронцов Г.И.* Ача-пăча вăййисем: Вăйăсем. Шăпа сăввисем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1992.

*Васильев Н.* Кĕçĕннисен кĕнеки. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1992.

Чăваш халăх сайчĕ – интернет-сайтри материалсем.

***Н.Н. Андреева**, Канаш районĕнчи*
*Уçырмари «Хĕвел» ача сачĕн*
*воспитателĕ*